25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
АПРЕЛЬ
5
КӖҪНЕРНИКУН
64(6815) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 2-мӗш фронт ҫарӗсен командующине
Совет Союзӗн Маршалне МАЛИНОВСКИЕ
Фронт штабӗн начальникне
Генерал-полковника ЗАХАРОВА

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем паян, апрелӗн 4-мӗшӗнче Словакин паха промышленность центрӗпе тӗп хулине—БРАТИСЛАВАНА—ҫулйӗрсен пысӑк узелне тата нимӗҫсен Дунай ҫинчи оборонин хӑватлӑн тӗреклетнӗ пунктне штурмласа туртса илнӗ.

БРАТИСЛАВАНА туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ҫаксем чапа тухнӑ: ШУМИЛОВ генерал-полковникӑн, ЛУКИН генерал-майорӑн, ОСТАШЕНКО генерал-майорӑн, ГРИГОРОВИЧ генерал-майорӑн, КРУЗЕ генерал-майорӑн, АЛЕХИН генерал-майорӑн, ОВСЯННИКОВ полковникӑн, АНДРЮШЕНКО полковникӑн, ЖУРАВЛЕВ генерал-майорӑн, БУРЕНИН генерал-майорӑн, ГРЕЧАНЫЙ генерал-майорӑн, ПАНОВ полковникӑн, САЛЫЧЕВ полковникӑн, ГОРБАЧЕВ генерал-майорӑн, ПЕРЕМАНОВ полковникӑн, СМИРНОВ генерал-майорӑн, ОРЛОВ полковникӑн, ЛОСЕВ генерал-майорӑн, МОЛОЖАЕВ генерал-майорӑн, КАРПУХИН генерал-майорӑн, МАРОЛЬ полковникӑн, ЕРЕМИН полковникӑн ҫарӗсем; ПЛИЕВ генерал-лейтенантӑн, ПИЧУГИН генерал-майорӑн, ГОЛОВСКИЙ генерал-майорӑн, СОКОЛОВ генерал-лейтенантӑн, ХЛЕТОВСКИЙ генерал-майорӑн, КИРИЛЛОВ генерал-майорӑн, ХРУСТАЛЕВ генерал-майорӑн, ПАВЛОВ генерал-майорӑн, БЕЛОУСОВ генерал-майорӑн, ШМУЙЛО генерал-майорӑн, ГАГУА полковникӑн, РЕВА полковникӑн кавалерисчӗсем; Хӗрлӗ Ялавлӑ Дунай флотилийӗн ХОЛОСТЯКОВ контр-адмиралӑн, 1-мӗш рангри капитанӑн СВЕРДЛОВӐН, 2-мӗш рангри капитанӑн ДЕРЖАВИНӐН, 2-мӗш рангри капитанӑн АРЖАВКИНӐН, ПАСМУРОВ майорӑн карапӗсемпе чаҫӗсем; артиллери генерал-полковникӗн ФОМИНӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ДЕРЕШӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ПЕТРОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ПРИБОЙЧЕНКӐН, МАРЧЕНКО полковникӑн, ПОПОЛЗУХИН полковникӑн, ЮРКО полковникӑн, МИРОНОВ полковникӑн, СТРОК полковникӑн, АДАМЧИК полковникӑн, БОГУШЕВИЧ полковникӑн, ПАВЛИК полковникӑн, КОЗАРЕНКО полковникӑн, МАКАРОВ полковникӑн, ШЕЙНИН полковникӑн, ЕРЕМЕНКО полковникӑн, БРОВАРНИК инженер-полковникӑн, ЛЮБИМОВ подполковникӑн, ПОПЛЫКО подполковникӑн, ЕВЛИН подполковникӑн, ТРОНЕВ подполковникӑн, ДЕНИСЕНКОВ подполковникӑн, САМЧЕНКО подполковникӑн, РОЖМАНОВ майорӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн КУРКИНӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн БОГДАНОВӐН, БРИЖИНЕВ полковникӑн, ЗЕТРАНУ полковникӑн, ЗАХАРЧЕНКО майорӑн, ГАПОНЕНКО подполковникӑн, БЕЛОУС подполковникӑн, ПОДЛЕСНЫЙ подполковникӑн, ТУРЧИН подполковникӑн, ШАЛК подполковникӑн, МОРОЗ подполковникӑн, СЕМЕНЕЦ майорӑн, СЕВРЮКОВ майорӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн ГОРЮНОВӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн СЕЛЕЗНЕВӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн СТЕПИЧЕВӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн ПОДГОРНЫЙӐН, авиаци генерал-майорӗн ПРОСТОСЕРДОВӐН, ТРУШИН полковникӑн, ШУТЕЕВ полковникӑн, ЧИЖИКОВ полковникӑн, ГЕЙБО полковникӑн, ЧАНПАЛОВ полковникӑн, РУББЕ полковникӑн, ТАРАНЕНКО полковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн ЦИРЛИНӐН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ПЛЯСКИНӐН, техникӑллӑ ҫарсен генерал-майорӗн КОСЕНКӐН, БАДАЕВ подполковникӑн, НАСОНОВ полковникӑн, МЯСНИКОВ полковникӑн, СЛЕПЧЕНКО майорӑн саперӗсем; сыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн ЛЕОНОВӐН, БОРИСЕНКО полковникӑн, ДАВЫДОВ полковникӑн, ШИШЕЛОВ майорӑн, СОКОЛОВ майорӑн, государство хӑрушсӑрлӑх полковникӗн КАРПОВӐН связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве палӑртса хӑварас тесе, БРАТИСЛАВА хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «БРАТИСЛАВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, апрелӗн 4-мӗшӗнче, 22 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, БРАТИСЛАВА хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, БРАТИСЛАВА хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи апрелӗн 4-мӗшӗ. № 330.

Совет Информаци Бюровӗнчен

АПРЕЛӖН 2-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Апрелӗн 2-мӗшӗнче БРАТИСЛАВА хули енче УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем малалла тапӑнса пынӑ, ТОПОЛЬЧАНЫ хулипе чугун ҫул станцине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—БОШАНЫ, ВЕЛКИ РИПНЯНЫ, СИЛАДИЦЕ, СУХА, ПУДМЕРИЦЕ, МОДРА, ПЕЗИНОК, ВАЙНОРИ, ФАРНА, БИШДОРФ (БРАТИСЛАВАРАН 4 километр хӗвелтухӑҫнерехре). ГУТОР, ШАМОРИН ятлӑ пысӑк ялсем тата БОШАНЫ, ВЕЛКИ РИПНЯНЫ, СИЛАДИЦЕ, СЕРЕД, МОДРА-ШЕНКВИЦЕ, ЧЕНЛИС, ВАЙНОРИ, УЗОР, БИШДОРФ чугун ҫул станцийӗсем.

ВЕНА хули енче НОЙЗИДЛЕР-ЗЕЕ кӳллин икӗ хӗрринче те пирӗн ҫарсем малалла тапӑнса пынӑ.

УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, БАЛАТОН кӳллинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре малалла тапӑнса пырса, апрелӗн 2-мӗшӗнче Болгари ҫарӗсемпе пӗрле Венгрири нефть промышленноҫӗн центрӗ пулса тӑракан НАДЬКАНИЖА хулине—ҫулсен паха узелне тата нимӗҫсен оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пунктне—туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 40 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—ШЕЙТЕР, ХАХОТ, БОЧКА, ЭСТЕРЕГНЬЕ, ЖОМОДЬСЕНТМИКЛОШ, БЕЛЕЗНА, СЕНТ МИХАЙ ятлӑ пысӑк ялсем.

Апрелӗн 1-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче фронт ҫарӗсем тӑшманӑн 10.000 салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ тата ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: танксем—35, бронетранспортерсем—20, хир тупписем—215, пулеметсем—170, автомашинӑсем—420, радиостанцисем—100, паровозсем—20, чугун ҫул вагонӗсем—780, боеприпас, хӗҫпӑшал тата апат-ҫимӗҫ склачӗсем—59.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусем пулман.

Апрелӗн 1-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 50 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 40 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Украинӑри 2-мӗш фронт ҫарӗсем ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ. Совет чаҫӗсем Брхи Трибецке тӑвӗсем урлӑ каҫса кайнӑ та тӑшманпа чехословаксен Топольчаны хули ҫывӑхӗнче ҫапӑҫма тытӑннӑ. Нимӗҫсем ку участока хыпалансах пехотӑн пӗр полкне, икӗ запасри батальона, саперсен бригадин чаҫӗсене илсе пынӑ та, малтанах хатӗрлесе хунӑ позицисемпе усӑ курса, темиҫе контратака тунӑ. Тӑшман контратакисене сирсе ярса, пирӗн боецсем малалла кайнӑ, ҫӗрле тӑшманӑн тӗреклетнӗ темиҫе пунктне тытса илнӗ. Паян ирхине совет ҫарӗсем, артиллери персе хӳтӗлесе тӑнипе, Нитра шывӗ урлӑ каҫса кайнӑ та Топольчаны хулине ҫурҫӗр енчен вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Ҫав хушӑра пирӗн ытти подразделенисем Нитра шывӗ урлӑ хуларан кӑнтӑр-тарахри вырӑнта каҫса кайнӑ. Кӑнтӑр тӗлӗнче ҫурҫӗр енчен, хӗвелтухӑҫ енчен тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ енчен пӗр харӑсах пырса ҫапса, фронт ҫарӗсем Топольчаны хулине туртса илнӗ. Хулана хӳтӗлесе тӑнӑ тӑшман чаҫӗсене йывӑр ҫухату кӳнӗ. Вара вӗсем, хӗҫпӑшал тата ҫар пурлӑхӗ нумай пӑрахса хӑварса, пӗр йӗркисӗр каялла чакнӑ.

Ӗнер Трнава хулипе Сенец хулине туртса илнӗ хыҫҫӑн пирӗн пехотинецсем тата кавалеристсемпе танкистсем малалла кайнӑ та тӑшманпа Малый Карпат тӑвӗсем ҫинчи ту каҫҫисемшӗн ҫапӑҫма тытӑннӑ. Малый Карпат тӑвӗсен хӗвелтухӑҫ айккинче вырнаҫса ларнӑ Модра ялӗпе Пезинок ялӗсене, тӑшман оборонин тӗреклетнӗ пункчӗсем пулса тӑраканскерсене, туртса илнӗ. Советсен гварди чаҫӗсем ҫав тери хӑвӑрт малалла ыткӑннӑ та Братислава хулинчен 4 километр хӗвелтухӑҫнерехре ларакан Бишдорф ялне туртса илнӗ. Тӑшман кунта хыпалансах ҫӗнӗ вӑйсем куҫарса илсе пырать, хытӑ хирӗҫ тӑрать. Кун каҫиччен нимӗҫсен 18 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ. Тыткӑна чылай илнӗ.

* * *

Балатон кӳллинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре Украинӑри 3-мӗш фронт ҫарӗсем ӑнӑҫлӑ наступление малалла вӑйлатса пынӑ. Болгари ҫарӗсемпе пӗрле кӗрешекен совет чаҫӗсем Надьканижа хули патне пымалли вырӑнсенчи тӑшман оборонине татнӑ та хулан хӗвелтухӑҫ хӗррине вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Чул ҫуртсенче ҫирӗпленсе ларнӑ нимӗҫсем хытӑ хирӗҫ тӑнӑ. Хаярӑн ҫапӑҫса, пирӗн ҫарсем хулан хӗвелтухӑҫ пайне йышӑннӑ та канал урлӑ каҫса кайнӑ. Вара тӑшман, ҫапӑҫӑва хӑйӗн Югославирен куҫарса килнӗ чаҫӗсене кӗртсе ярса, темиҫе контратака тунӑ. Виҫӗ енчен вӑйлӑн пырса ҫапса, пирӗн ҫарсем нимӗҫсене йывӑр ҫухату кӳнӗ, вара тӑшманӑн хыпалансах каялла чакма лекнӗ. Венгрин нефть промышленноҫӗн центрӗ пулса тӑракан Надьканижа хулине тӑшмантан пӗтӗмӗшпех тасатнӑ. Хулана пырса кӗмелли вырӑнсенче тата хула урамӗсенче нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсен 3.000 виллине ҫити выртса юлнӑ. Трофейсем нумай тытса илнӗ. Тыткӑна нумай илнӗ. Надьканижа хули пирӗн ҫарсен аллине лекнипе нимӗҫсен горючи тӑратакан тата тепӗр питӗ паха пункчӗ пӗтсе ларнӑ.

Совет воинӗсем тӑшманпа хӑюллӑн та паттӑррӑн ҫапӑҫаҫҫӗ. Гварди капитанӗ Кулишев ертсе пыракан стрелковӑй батальон ҫӗрле пӗр юханшыв ҫине пырса тухнӑ. Гвардин кӗҫӗн лейтенанчӗ Старченко пӗр Титаренко ятлӑ красноармеецпа пӗрле ҫав шыв урлӑ каҫнӑ. Шыв урлӑ ӑҫтан каҫмаллине пурне пӗлнӗ хыҫҫӑн Старченко ҫав красноармеецa каялла батальона пӗлтерме янӑ, хӑй каҫӑ патӗнчен аякка кайнӑ та тӑшмана улталаса тесе автоматпа пеме тытӑннӑ. Старченко кӗҫӗн лейтенант, пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна куҫса пырса, 20 минут хушши автоматпа персе тӑнӑ. Хӑраса ӳкнӗ нимӗҫсем хӑйсен мӗнпур хӗҫпӑшалӗсемпе Старченко пенӗ тӗлелле пеме тытӑннӑ. Ҫак хушӑра батальон боецӗсем шыв урлӑ ӑнӑҫлӑн каҫнӑ та, ҫав тери хӑвӑрт атакӑласа, лайӑх позицисем туртса илнӗ. Вара батальон шывӑн хӗвеланӑҫ хӗрринче ҫирӗпленсе ларнӑ, тӑшманӑн виҫӗ контратакине сирсе янӑ, 300 нимӗҫе ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра нимӗҫсем юханшыв ҫинчи кӗпер айне минӑсем хунӑ. Гварди старшини Ховриенко тӑшман персе тӑнине пӑхмасӑр ҫав минӑсене пурне те сиенсӗрлетнӗ те хамӑр танксене шыв урлӑ хӑвӑрт каҫса кайма май туса панӑ. Гвардин кӗҫӗн лейтенанчӗ Леонтьев ертсе пыракан танк экипажӗ тӑшман тӑнӑ вырӑна вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та танк гусеницисемпе таптаса 50 гитлеровеца вӗлернӗ.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн авиацийӗ нимӗҫсен Данциг бухтинчи суднисене аталанӑ. Тӑшманӑн пӗр пысӑк ҫар карапне бомба тӳрех пырса тивнӗ.

* * *

Белоруссири 1-мӗш фронтра нимӗҫсен 402-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирне Зигмунд фон Шлейниц генерал-лейтенанта тыткӑна илнӗ. Вӑл ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Хӗрлӗ Ҫар эпир шутланинчен нумай вӑйлӑрах наступлени туса пычӗ. Пирӗн Висла шывӗ ҫинчи фронта ҫав тери хӑвӑрт аркатса тӑкассине пӗр нимӗҫ генералӗ те шутламан. Унти фронта никам та ҫӗнтерейме тесе шаннӑ эпир. Померанири ҫарсем хӑрушлӑха кӗрсе ӳкесси палӑрма пуҫласан, нимӗҫ командованийӗ ҫар шкулӗсенче вӗренекенсенчен тата запасри чаҫсенчен тӑватӑ дивизи турӗ те васкасах фронта ячӗ. Унсӑр пуҫне, Померание темиҫе дивизи хӗвеланӑҫ фронтӗнчен, Норвегирен куҫарса тата фронтӑн ытти участокӗсенчен те илсе пычӗҫ. Анчах та пирӗн лару-тӑрӑва вӗсем те ҫӑлма пултараймарӗҫ. Нимӗҫсен Померанири группировкине Хӗрлӗ Ҫар аркатса тӑкрӗ. Манӑн полксене пӗрин хыҫҫӑн теприне ҫӗмӗрсе тӑкрӗҫ, ҫапла пӗтӗм дивизи пӗтсе ларчӗ. Унӑн юлашкийӗсем вӑрмансене тарса сапаланса пӗтрӗҫ, эпӗ хам тыткӑна лекрӗм».

Шупашкар хулинчи парти активӗн пухӑвӗ

Шупашкар хулинчи парторганизаци активӗн пухӑвӗ пулса иртрӗ. Вӑл ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн XXI-мӗш пленумӗн итогӗсем ҫинчен ВКП(б) горкомӗн секретарӗ Ислюков юлташ тунӑ доклада сӳтсе-яврӗ.

Докладчик ҫакна кӑтартса пачӗ: хулари предприятисемпе учрежденисен подсобнӑй хуҫалӑхӗсем тата хулари колхозсем акса тӑракан ҫӗр 2.140 гектар шутланать. Кунсӑр пуҫне, пӗлтӗр уйрӑм ҫынсен пахчисем 321 гектар ҫӗр йышӑннӑ. Ҫав ҫӗрсем ҫинче ҫуракине мӗнле хатӗрленеҫҫӗ-ха? Ҫуракине ӑнӑҫлӑн хатӗрленнипе пӗрлех нумай коллективсенче пысӑк ҫитменлӗхсемех пур-ха. Хулари колхозсенче тата Каплин юлташ ОРС начальникӗ пулса ӗҫлекен заводӑн подсобнӑй хуҫалӑхӗнче нумай ҫулсем хушши ӳсекен куракӑсен вӑрлӑхӗсем ҫитмеҫҫӗ. Чебторгӑн ҫӗрулмипе сухан вӑрлӑхӗсен чылай пысӑк пайӗ пӑсалнӑ. Хулара ҫӗрулми тӑррисене касмалли плана пурнӑҫа кӗртсе пымаҫҫӗ. «Социализм» колхозра тата кирпӗч завочӗпе Чебторгӑн подсобнӑй хуҫалӑхӗсенче лашасем начар, унта лашасене кирлӗ пек пӑхмаҫҫӗ. Хулари колхозсемпе подсобнӑй хуҫалӑхсенче ялхуҫалӑх машинисене юсаса пӗтермен, удобренисемпе сахал усӑ кураҫҫӗ. «Росглаввино» совхозӗнче тислӗке пӗтӗм хир тӑршшӗпе сапаласа пӑрахнӑ, ҫакна пула тислӗкӗн пахалӑхӗ чакать. Каплин юлташ ОРС начальникӗ пулса ӗҫлекен заводра ҫеҫ теплицӑсем тунӑ. Фидий юлташ ертсе пыракан ОРС тата Чебторгӑн подсобнӑй хуҫалӑхӗ пахча-ҫимӗҫсене ир туса илес ӗҫе пурнӑҫа кӗртмен. «Росглаввино» совхозӗнче лайӑх теплицӑсемпех, вӗсен пӗчӗк ҫитменлӗхӗсем пур пирки, усӑ курмаҫҫӗ.

Докладчик малалла ҫакна кӑтартса пачӗ: кӑҫал ҫуркунне уйрӑм пахчасемпе коллективлӑ пахчасен лаптӑкӗ ӳсмелле. Ҫавӑнпа ҫуркуннехи ӗҫсене тума вӑйлӑрах хатӗрленмелле, пахча комиссийӗсен ӗҫне чӗртсе ямалла.

Партин организацилле ӗҫӗ ҫинчен докладчик ҫапла каларӗ: вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Шупашкар хулинчи парторганизаци партипе правительство паракан заданисене пурнӑҫламашкӑн массӑсене лайӑхрах мобилизацилеме вӗренсе ҫитрӗ, ертсе пыракан кадрсем чылай вӗрентсе хатӗрлерӗ. Юлашки вӑхӑтра пирӗн кадрсем марксизм-ленинизма тӑрӑшарах вӗренме пуҫларӗҫ. Ҫавӑнпа пӗрлех марксизм-ленинизма вӗрентекен каҫхи университетӑн тата партин каҫхи шкулӗн ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсемех пур-ха, ҫав ҫитменлӗхсем ҫинчен ВКП(б) Обкомӗн пленумӗнче тӗрӗс каларӗҫ. Университета тата каҫхи шкула ҫынсем сахал ҫӳреҫҫӗ. Чылай коммунистсем вӗренӳ йывӑрлӑхӗсенчен хӑраса ӳкнӗ. Сыхӑну управленийӗнчи парторганизацин секретарӗ Жукова юлташ ҫапла шутлать: «Эпӗ пӗтӗм республика тӗлӗшпе ӗҫлекен ҫын, манӑн партин каҫхи шкулне ҫӳреме вӑхӑт ҫук» тет. Тир-сӑран комбинатӗнчи парторганизацин секретарӗ Моисеев юлташ та политикӑна вӗренес ӗҫе хисеплемест. Коммунистсем хӑйсен идейӑпа политика пӗлӗвӗсене хӑпартас ӗҫ ҫине ҫавӑн пек ҫиелтен пӑхнине пӗтерсе лартмалла.

Хулари парторганизацире ҫакӑн пек фактсене пӗтермен-ха: партилле-политикӑллӑ ӗҫе хӑш чухне хуҫалӑх задачисемпе ҫыхӑнтармасӑр туса пыраҫҫӗ (Водосвет), хӑшпӗр парторганизацисен секретарӗсем, хуҫалӑхри вак ыйтусем пирки нумай ӗҫлесе, массӑсем хушшинче тумалли политикӑллӑ ӗҫе начарлатса яраҫҫӗ (торф предприятийӗ, ҫӑкӑр комбиначӗ), хӑшпӗр чухне парторганизацисен пухӑвӗсене хатӗрленмесӗр ирттереҫҫӗ, никама нимӗн тума хушман формальнӑй решенисем йышӑнаҫҫӗ. (Коопинсоюз, Горький—Хусан ҫулӗн управленийӗ т. ыт. те). Уйрӑм парторганизацисенче критикӑпа самокритика начар, ҫакна пула хуҫалӑх руководствин пысӑк ҫитменлӗхӗсене витсе хӑвараҫҫӗ (Якунин юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен завод, пир-авӑр фабрики тата ыттисем те). Критикӑпа самокритикӑна вӑйлатса ямалла, вӗсене фронта ытларах пулӑшас тӗлӗшпе хамӑр умра тӑракан задачӑсене пурнӑҫласа ҫулпа ямалла, коммунистсене партин решенийӗсене вӑхӑтра та лайӑх пурнӑҫласа пыма хушмалла.

Докладчик малалла ҫакна палӑртрӗ: хулари малта пыракан ҫынсене партие илсе, хулари парторганизаци вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа хӑйӗн йышне чылай ӳстерчӗ. Партие ҫӗнӗ ҫынсене илес тӗлӗшпе пысӑк заводсенчи, ялхуҫалӑх институтӗнчи тата ытти учрежденисенчи пуҫламӗш парторганизацисем уйрӑмах пысӑк ӗҫ турӗҫ. Ҫакӑнпа пӗрлех уйрӑм парторганизацисем большевиксен партипе чи лайӑх ҫынсене, тӗрӗсленӗ юлташсене илмеллине манса кайнӑ, чи кирлӗ профессиллӗ рабочисене, ҫамрӑксене тата хӗрарӑмсене партие илес тӗлӗшпе ҫителӗклӗ ӗҫлемен.

Хулара партин кандидачӗсене партие кӗме хатӗрлес тӗлӗшпе начар ӗҫлеҫҫӗ, ҫавна пула чылай кандидатсен кандидат стажӗсем иртсе кайнӑ.

Чылай парторганизацисенче партин хуҫалӑхне начар йӗркелесе пыраҫҫӗ, член укҫине нумайранпа тӳлеменнисем чылай, коммунистсем пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна куҫмалли йӗрке ҫинчен калакан инструкцие пӑсаҫҫӗ (пысӑк заводсем, торф предприятийӗ, Чебторг), партин документӗсене тирпейсӗр усрани те пулкаланӑ (театр).

Пуҫламӗш чылай парторганизацисенче профсоюзсен ӗҫне начар ертсе пыраҫҫӗ. Чебторгра работниксен 60 проценчӗ ҫеҫ профсоюзра тӑраҫҫӗ. Табак фабрикинче виҫӗ уйӑх ытла ӗнтӗ фабрика комитечӗн председателӗ ҫук. Профсоюзсен ӗҫне хулари мӗнпур коллективсенче вӑйлатмалла. Ҫавӑн пекех тата комсомол организацийӗсене те лайӑхрах ертсе пымалла, вӗсене куллен пулӑшса пымалла.

Пирӗн задача, тет юлашкинчен докладчик, ҫакӑ пулса тӑрать: коммунист ятне тата большевиксен партийӗн членне кирлӗ пек таса сыхласа тӑмалла, чӑн-чӑн большевиксем пек ӗҫлемелле, хамӑр хыҫран массӑсене ертсе пымалла. Йывӑрлӑхсемпе кӗрешсе, фашистла нимӗҫ захватчикӗсене тӑтӑклӑн ҫӗнтерес ӗҫе сывхартмашкӑн массӑсене мобилизацилемелле.

Ислюков юлташӑн доклачӗ тӑрӑх 12 ҫын тухса каларӗҫ.

Горсовет исполкомӗн председателӗ Аникин юлташ уйрӑм тата коллективлӑ пахчасенче ҫурхи ӗҫсене туса ирттерме тивӗҫлипе хатӗрленмелли ҫинчен каларӗ.

Заводри ОРС-ӑн начальникӗ Каплин юлташ заводӑн подсобнӑй хуҫалӑхӗ ҫуракине хатӗрленес ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе мӗнле мерӑсем йышӑнни ҫинчен каласа пачӗ.

Апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗн Халӑх Комиссарӗ Калинкина юлташ хулари апат-ҫимӗҫ комбиначӗн подсобнӑй хуҫалӑхне организацилемелли ҫинчен каларӗ.

ВКП(б) горкомӗн оргинструкторски отделӗн заведующийӗ Шаронова юлташ пуҫламӗш чылай парторганизацисенче партилле-организацилле ӗҫсем мӗнле пыни ҫинчен каларӗ.

Тухса калаҫакансем «Росглаввино» совхозӗн директорне Бахарев юлташа тивӗҫлипе критиклерӗҫ, мӗншӗн тесен Бахарев юлташ хӑйӗн сӑмахӗнче ҫав совхоз ҫуракине хатӗрленес ӗҫри пысӑк ҫитменлӗхсене мӗнле пӗтерме шутлани ҫинчен, хӑйӗн ҫӗрӗпе туллин те тухӑҫлӑрах усӑ курмашкӑн мӗн-мӗн тума шутлани ҫинчен сахал каларӗ.

Пуху ВКП(б) Обкомӗн XXI-мӗш пленумӗ лартнӑ задачӑсене—хулари парторганизацисен партилле-организацилле ӗҫне лайӑхлатас тата ҫуракине ӑнӑҫлӑн хатӗрленес задачӑсене пурнӑҫлас тӗлӗшпе практикӑллӑ решени йышӑнчӗ.

Пуху ӗҫне ВКП(б) Обкомӗпе горкомӗн секретарӗ Чарыков юлташ, Чӑваш АССР Совнаркомӗн председателӗ Матвеев юлташ, Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн председателӗ Андреева юлташ тата партин ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ ҫумӗнчи Контроль Комиссийӗн Чӑваш республикинчи уполномоченнӑйӗ Логвин юлташ хутшӑнчӗҫ.

Малти ретре пыракансем

Йӗпреҫ вӑрман хуҫалӑхӗнче ӗҫлекенсем вӑрман хатӗрлевӗн планне Хӗрлӗ Ҫар 27 ҫул тултарнӑ кун тӗлне тултарассишӗн ӑмӑрту пуҫарса яраканӗсем пулчӗҫ. Вӗсем ҫак ӑмӑртура илнӗ обязательствӑсене хисеплӗн те срокчен пурнӑҫларӗҫ. Хӗрлӗ Ҫар кунӗ тӗлне плана касас енӗпе 132 процент, турттарас енӗпе 100,5 процент тултарчӗҫ. Хальхи вӑхӑта илсен, вӗсем планран ирттерсе сахал мар вутӑ хатӗрлесе турттарса пачӗҫ. Коллектив ытти заданисене те ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пырать.

План тӑрӑх кунта 120 ҫын ҫурран, 50 ҫын лашапа ӗҫлемелле. Тӗрӗссипе кунта вӑтамран кашни уйӑхра ҫуран 142 ҫын, лашапа 71 ҫын ӗҫлеҫҫӗ.

Вӑрман хатӗрлеме килнисем ӗҫе пӑрахса каймаҫҫӗ. Мӗншӗн тесен вӗсен пурнӑҫпа ӗҫ условийӗсем аван: бараксем ӑшӑ та ҫута, вӗсене тирпейлӗ тытас тӗлӗшпе уйрӑм работницӑсем ӗҫлеҫҫӗ, вунӑ кунта пӗрре рабочисем мунча кӗреҫҫӗ, чирлисене пӑхма е ӑнсӑртран аманнисене ҫийӗнчех пулӑшма фельдшер пур.

Колхозниксене вӑрман хатӗрлеме пӗтӗмӗшпех ӑсатас, вӗсем валли—апат-ҫимӗҫ, лашасем валли—фураж вӑхӑтра тата ҫителӗклӗ тӑратас тӗлӗшпе Чурачӑк районӗн руководителӗсем кирлӗ пек ӗҫлеҫҫӗ. Райком секретарӗ Артемьев, райсовет председателӗ Скворцов юлташсем вӑрман касас ӗҫре мӗн ҫитмест, мӗн кирлӗ, ӗҫе ӑнӑҫуллӑрах тума мӗнле меслетсем пур—ҫак ыйтусемпе тӑтӑшах интересленсе тӑраҫҫӗ. Вӑрман хуҫалӑхӗнче ҫакна ӗҫ вӑйӗ тӑратакансем хушшинче сыхӑну пур—кунта ӗҫе ӑнӑҫлӑн тума май парать. Ӗҫлекенсем патне час-часах колхоз председателӗсем пыра-пыра каяҫҫӗ.

Ӑнӑҫлӑ ӗҫӗн тепӗр енӗ—ӗҫлекен ҫынсем хӑйсем чӑнах та кирлӗ ӗҫ тунине ӑнланни.

— Ҫӗршыв ыйтнине пурнӑҫлатпӑр,—теҫҫӗ кунта вӑрман касакансем.—Малтисенчен кая юлма намӑс. Ҫак ҫула пур енчен те ҫӗнтерӳ ҫулӗ пултӑр тетпӗр.

Патриотизм,—ҫакӑ тӑвать ӗҫе, ҫакӑ вӑй парать, хӑват парать...

В. РЗАЙ.

Клементина Черчилль госпожа Мускава килнӗ

СССР Правительстви тата СССР-ти Хӗрлӗ Хӗреспе Хӗрлӗ Ҫурӑйӑх Обществисен Союзӗн Исполкомӗ чӗннипе апрелӗн 2-мӗшӗнче Мускава Британии «Российӑна пулӑшмалли фонд» Комитечӗн Председателӗ, Великобритани Премьер-Министрӗн арӑмӗ Клементина Черчилль госпожа килнӗ. Унпа пӗрле «Российӑна пулӑшмалли фонд» Комитечӗн секретарӗ М. Джонсон килнӗ. К. Черчилль госпожапа пӗрле ҫавӑн пекех СССР-ӑн Хӗрлӗ Хӗреспе Хӗрлӗ Ҫурӑйӑх Обществисен Союзӗн Исполкомӗн Лондонри представителӗ С. А. Саркисов профессор килнӗ.

Центральнӑй аэродромра К. Черчилль госпожана ҫаксем хирӗҫ тухса кӗтсе илнӗ: СССР Ют ҫӗршывсен Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ И. М. Майский, П. С. Жемчужина-Молотова, СССР-ти Хӗрлӗ Хӗреспе Хӗрлӗ Ҫурӑйӑх Обществисен Союзӗн Исполкомӗн Председателӗ С. А. Колесников, Мускав хула Совет Исполкомӗн Председатель Заместителӗ М. В. Сарычева, СССР-ти Хӗрлӗ Хӗреспе Хӗрлӗ Ҫурӑйӑх Обществисен Союзӗн Исполкомӗн Председатель Заместителӗ П. Д. Диваков, Л. Д. Кислова, Т. К. Кошелева тата ыттисем те. П. С. Жемчужина-Молотова К. Черчилль госпожана чечек ҫыххи панӑ.

Аэродромра тата ҫаксем пулнӑ: Великобритани Посолӗ А. Керр господин, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Посолӗ А. Гарриман господин, Великобританин Ҫар Миссийӗн Начальникӗ Э. Арчер контр-адмирал тата Великобритани Посольствин дипломатиллӗ составӗ.

Аэродрома Британипе Совет Союзӗн ялавӗсем ҫакса илемлетнӗ.

Черчилль госпожа калани

Мускав радиовӗнче микрофон умӗнче К. Черчилль госпожа ҫапла каланӑ: «Ҫакӑ манӑн пурнӑҫри чи хумхантаракан тата хавхалантаракан тапхӑр пулать. Сирӗн аслӑ ҫӗршывӑра манӑн тахҫанах килес курас килетчӗ, мӗншӗн тесен вӑрҫӑн нумай ҫулӗсем хушшинче эпӗ тата, пирӗн ҫӗршыври хӗрарӑмсемпе арҫынсем сирӗн питӗ чаплӑ ҫарӑр тата сирӗн мӗнпур арҫынӑрсемпе хӗрарӑмӑрсем ҫав тери тӑрӑшнипе эпир савӑнса, хисеплесе, хумханса, тӗлӗнсе тата юратса сӑнаса тӑтӑмӑр. Сирӗн патӑрта пулнипе эпӗ питӗ кӑмӑллӑ, ҫакӑн пек пулассине шанса тӑратӑп».

«ТИСКЕР КАЙӐК ШӐТӐКӖНЧЕ» ТАТА «ТУРИ СИЛЕЗИРӖ» ЯТЛӐ КИНОКАРТИНАСЕМ

СССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Кинематографи комитечӗ Хӗрлӗ Ҫар Хӗвелтухӑҫ Пруссире тата нимӗҫ Силезийӗнче наступлени тунине кӑтартакан икӗ кинокартинӑна пахса тухнӑ.

Ҫав кинокартинӑсенчен пӗрри—«Тискер кайӑкӑн шӑтӑкӗнче» ятлӑ. Ӑна документлӑ фильмсен центральнӑй студийӗн 19 чи лайӑх кинооператорӗ тата Хӗрлӗ Ҫар боецӗсенчен 6 оператор-доброволец ӳкерсе илнӗ. Ҫав кинокартина Белоруссири 2-мӗшпе 3-мӗш фронтсен ҫарӗсем Тильзит, Алленштайн, Инстербург, Эльбинг хулисемшӗн тата ыттисемшӗн те ҫапӑҫнине кӑтартать.

Тепӗр кинокартина — «Тури Силезире» ятлӑ. Вӑл Украинӑри 1-мӗш фронт ҫарӗсем Сандомир плацдармӗшӗн ҫапӑҫнине, Домброва ҫӗркӑмрӑк бассейнӗн центрне Катовице хулине ирӗке кӑларнине, нимӗҫ Силезийӗнчи пӗрремӗш хулана—Крайцбурга туртса илнине кӑтартать.

Икӗ фильма та ҫывӑх вӑхӑтрах кинотеатрсенче кӑтартма пуҫлаҫҫӗ. (ТАСС).

РЕСПУБЛИКА ТӐРӐХ

ПӖРЛЕШӲЛЛӖ МУНЧАСЕМ

МУРКАШ. Ярапайкасси ял Советӗнчи «Автогигант» колхозра кӑҫал пӗрлешӳллӗ мунча тунӑ. «Красное Оточево» колхозра та ҫавӑн пек мунча тӑваҫҫӗ.

ҪӐМ АРМАНӖНЧЕН ПЫСӐК ТУПӐШ ИЛЕҪҪӖ

ҪӖРПУ. Кӑшаркассинчи «Пионер» колхоз ҫӑм арманӗнчен ҫулсеренех пысӑк тупӑш илет. Иртнӗ ҫулта, сӑмахран, 45 пин тенкӗ тупӑш илнӗ. Ҫӑм арманӗн мастерӗ К. Крупов кӑҫал татах та ытларах тупӑш парассишӗн тӑрӑшать.

14 ҪУЛХИ АЧА 500 ӖҪКУНЕ ТУНӐ

ЧУРАЧӐК. Ямпахри «Первое мая» колхозри Н. Петров, 14 ҫулхискер, иртнӗ ял хуҫалӑх ҫулӗнче 500 ӗҫкунӗ тунӑ. Колхоз ӗҫне вӑл кӑҫал та активлӑн хутшӑнать.

ВЫЛЯВ УКҪИ ТӲЛЕССИ ӲССЕХ ПЫРАТЬ

КУСЛАВККА. Районра государство заемӗсен вылявӗсем тӑрӑх укҫа тӳлесси ӳссех пырать. Кӑҫалхи январьпе февраль уйӑхӗсенче районри перекет касси 90 пин тенкӗ тӳленӗ. Чылайӗшсем темиҫе пиншер тенкӗ выляса илеҫҫӗ. Куславкка поселокӗнчи Н. Морсковӑн пӗр облигаци ҫине 10 пин тенкӗ тухнӑ.

24 ХВАТТЕРЛӖ ҪУРТ ЛАРТАҪҪӖ

РСФСР Коммунальнӑй Хуҫалӑх Халӑх Комиссариачӗ кӑҫал Шупашкарта ҫӗнӗ ҫуртсем лартма палӑртнӑ. Июлӗн 1-мӗшӗччен 24 хваттерлӗ ҫурт туса пӗтермелле. Унсӑр пуҫне 2 километр тӑршшӗ шыв пӑрӑхӗ ҫӗнӗрен хывмалла. Ҫак ӗҫсем валли строительство материалӗсем уйӑрса пама тытӑннӑ.

1945 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн машинно-тракторнăй станцисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне организацилер!

Çуракине кăтартуллăн туса ирттерер!

Полтава облаçĕнчи Лохвица МТС-ĕн трактористчĕсемпе комбайнерĕсем, агрономĕсемпе механикĕсем Совет Союзĕнчи мĕнпур машинно-тракторнăй станцисен работникĕсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Пирĕн аслă Тăван çĕршыв хавасла кунсенче пурăнать. Геройла Хĕрлĕ Çар, Тăван çĕре нимĕç вăрă-хурахĕсенчен тасатса çитерсе, çав ирсĕрсене хăйсен шăтăкĕсенчех çапа-çапа аркатать. Мĕнпур халăхпа пĕрлех эпир те, Лохвица МТС-ĕн работникĕсем, хамăрăн юратнă аннемĕрĕн—Тăван çĕршывăмăрăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн тата тыслăхĕшĕн кĕрешес ĕçре Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа пулăшма тăрăшатпăр.

1944 çул пирĕн машинно-тракторнăй станцишĕн нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă хыççăнхи пĕрремĕш çулталăк пулчĕ. Çав çул вăл пирĕншĕн çăмăлах пулмарĕ. Вăрçăччен пысăк та пуян, чаплă МТС пулнă вырăнта нимĕççем арканчăкпа кĕл кăна хăварчĕç. Нимĕççем пирĕн колхозсене çаратса пĕтерчĕç: выльăх-чĕрлĕхсемпе лашасене, машинăсемпе тырпула турттарса илсе кайрĕç, пусуçаврăнăшĕсене пĕтерсе тăкрĕç, уйхирсене пăсса пĕтерчĕç.

1944-мĕш ялхуçалăх çулне эпир çавăн пек йывăр лару-тăрура пуçларăмăр. Колхозсенчи уйхир ĕçĕсен тĕп йывăрлăхĕ МТС-сем çине ӳкрĕ. Çав тери пысăк йывăрлăхсене пăхмасăрах, эпир хамăрăн задачăна ăнăçлăн татса патăмăр. Акакан çĕр лаптăкне пĕр çулталăк хушшинче эпир вăрçăччен хи виçене çитертĕмĕр. Трактор ĕçĕсен çулталăкри планне МТС 156,4 процент тултарчĕ.

Демид Симон тракторист «Универсал—2» тракторпа çулталăкра 1482 гектар сухаларĕ. Иван Галько бригадинчи кашни трактор вăтамран 1.030 гектар тунă. Повзун, Ткач, Перетятько тата ытти трактористсем, хăйсемпе мăшăррăн ĕçлекен трактористсемпе пĕрле, кашни тракторпа 1800—1900 гектар сухаланă. Çамрăк трактористкăсем — Настя Ухань, Татьяна Адамова, Паша Овсяник юлташсем, тракторпа пĕр сезон кăна ĕçленĕскерсем, çулталăкри нормăсене 2—3 хут ирттерсе тултарчĕç. Пирĕн МТС-ра хăйĕн çулталăкри задачине ирттерсе тултарманни пĕр бригада та пулман.

Сезонра эпир шĕвĕ топливăна 56 тонна перекетлесе хăвартăмăр, тракторпа сухаланă кашни гектарăн хăйне ларакан хакне 16 процент чухлĕ йӳнетрĕмĕр. Пирĕн МТС хăй колхозсенче ĕçленĕшĕн натуроплата памалли плана 147 процент тултарчĕ.

МТС ăнăçлăн ĕçлени тата колхозниксем, уйрăмах хĕрарăмсем, пысăк активлăхпа ĕçлени пирĕн колхозсене лайăх тырпул çитĕнтерсе, ăна ăнăçлăн пухса кĕртме пулăшрĕ. Ильич, Ворошилов ячĕсемпе тăракан тата ытти колхозсем гектартан 120—180-шар пăт тулă, уйрăм участоксенче 200-шер пăт тулă туса илчĕç. Орджоникидзе ячĕпе тăракан колхоз 44 гектар пысăкĕш плантацири кашни гектартан 240-шер центнер сахăр кăшманĕ туса илнĕ, çав колхозри Меланья Кривобок звени вара хăйĕн участокĕ çинчи кашни гектартан 400-шер центнер сахăр кăшманĕ туса илчĕ. Пирĕн колхозсем государствăна тырăпа ытти ялхуçалăх çимĕçĕсем памалли плана срокчен тултарчĕç те планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 234.000 пăт тĕштырă пачĕç. Иртнĕ çулта Лохвица МТС-ĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура ниĕ хутчен мала тухрĕ. Пĕлтĕрхи çуркуннерен пуçласа паянхи куна çитиччен эпир СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне хамăр алăра тытса тăратпăр.

Тепĕр темиçе кунран Полтавщинăпа пĕтĕм совет Украинин паха çĕрĕсем çинче çурхи уйхир ĕçĕсем пуçланаççĕ. Совет правительствипе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1945 çулта мĕнпур ялхуçалăх работникĕсем умне тĕп задача—тырпул тухăçлăхне тата пухса кĕртекен пĕтĕм тĕштырăпа ытти пĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсен хисепне пур майсемпе те ӳстерес задача лартрĕç. Çав задачăна пурнăçа кĕртес ĕçре МТС-сем пысăк вырăн йышăнса тăма тивĕçлĕ. Пирĕн умра кăçалхи çул машинăсемпе тракторсен паркне лайăххах та тухăçлăрах ĕçлеттерес, трактор ĕçĕсен пахалăхне ӳстерес тата хамăрăн колхозсем умĕнчи обязательствăсене агротехникăн чи лайăх срокĕсенче пурнăçа кĕртес тĕп задача тăрать.

Ĕç ăнăçлăхĕ, пуринчен малтан, эпир çуракине мĕнле хатĕрленсе кĕтсе илнинчен килет. Пирĕн МТС-ăн коллективĕ çав ответлă ĕçе тума вăхăтра тытăнчĕ те хĕлĕпех ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕ. Тракторсене эпир январĕн 22-мĕшĕ тĕлнех юсаса çитертĕмĕр. Пур машинăсене те районри государство комиссийĕ тĕрĕслесе йышăнчĕ, халĕ вĕсене колхозсене ăсатнă. Тракторсем çумне кăкарса ĕçлемелли инвентаре те пĕтĕмĕшпех юсанă. Хамăрăн тракторсене юсаса пĕтерсен, эпир кӳршĕри Сарск МТС-не социализмлă пулăшу патăмăр. Унта эпир хамăр рабочисене ятăмăр тата хамăрăн мастерскойра çав МТС-ăн хăшпĕр заказĕсене пурнăçлатпăр. Уйхир ĕçĕсем пуçланиччен эпир бригадăсем валли заправка тумалли инвентарьсем, тракторсен запаслă пайĕсемпе ытти тĕрлĕ ĕç хатĕрĕсем çителĕклĕ хупса патăмăр. Иртнĕ çулхи примерпа эпир автомашина çинче куçса çӳрекен мастерской туса йĕркелетпĕр. бригадăсенче вара машинăсене хиртех техника тĕлĕшĕнчен пăхса тухма лупасайĕсем тăватпăр.

Хĕл каçиччен эпир халиччен ĕçленĕ трактористсене пурне те тепĕр хут вĕрентрĕмĕр тата çĕнĕрен 56 тракторист вĕрентсе кăлартăмăр.

МТС агрономĕсемпе пĕрле мĕнпур колхозсенче пусуçаврăнăшĕсене хăвăртрах йĕркене кĕртмелли мерăсене палăртса хутăмăр. Кашни колхозрах çуракине ирттерес тата тырпулсене пăхса çитĕнтерес ĕçри агротехникăллă мероприятисене палăртса хураççĕ. Агрономсем çавăн пекех колхозниксене, бригадирсемпе звеньевойсене агротехникăна вĕрентес ĕçе те хутшăнчĕç, вĕсене колхозсенчи ĕçе тĕрĕс организацилеме пулăшрĕç. Пирĕн колхозсен пурин те вăрлăхсем çителĕклĕ, уйхире 16.000 тонна вырăнти удобрени хатĕрлесе кăларăмăр.

Совет Союзĕнчи мĕнпур трактористсемпе комбайнерсене, агрономсемпе механиксене, инженерсене, МТС-сен мĕнпур работникĕсене эпир çапла чĕнсе калатпăр:

Кăçалхи çуракине пахалăхлăн туса ирттерессишĕн, мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртессишĕн МТС-сен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне организацилер!

Хамăр енчен эпир çаксене тума пулатпăр:

1. Çураки вăхăтĕнче кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 280 гектартан кая мар çемçе суха сухаламалла, пĕтĕм çулталăк хушшинче вара—700 гектартан кая мар сухаламалла (ку шута авăн çапасси кĕмест); трактор ĕçĕсене пысăк пахалăхлăн туса ирттермелле; шĕвĕ топливăна 10 процент чухлĕ перекетлесе хăвармалла; тракторпа сухаланă кашни гектарăн хăйне ларакан хакне государство планĕ тăрăх пăхнинчен 15 процент чухлĕ йӳнетмелле.

2. Ир акмалли тĕштырă культурисене 6 ĕç кунĕ хушшинче, агротехникăн чи лайăх срокĕсенче акса хăвармалла. Уйхир ĕçĕсен пахалăхне çирĕп контроллесе тăмалла, тăпрана акас умĕн сухаласа çемçетмелли, акмалли тата тырă калчисене пăхса çитĕнтермелли агротехника правилисене çирĕп пăхăнса пымалла. Тăпрана типесрен сыхлас шутпа, кĕрхи çĕртме тунă пусăсене тата пропашной культурăсем пулнă участоксене малтанхи икĕ кун хушшинче сӳрелесе тухмалла. Кĕрхи тырăсем акнă мĕнпур пусăсене çуркунне сӳрелесе хăвармалла; кĕрхи тырă калчисем вăйсăр участоксенче калчасене вырăнти удобренисемпе апатлантарассине организацилемелле.

3. Сахăр кăшманне кĕрхи çĕртме тунă чи лайăх уйхире, агротехникăн чи лайăх срокĕсенче тата агротехникăн мĕнпур правилисене пăхăнса пырса, 6 ĕç кунĕ хушшинче акса хăвармалла; сахăр кăшманĕ акнă плантацисем çинчи калчасене тĕплĕн пăхса тăмалла, тракторсемпе букировка туса ирттермелле, сахăр кăшманĕ акнă мĕнпур уйхирте ретсем хушшине кăпкалатса тухмалла тата сахăр кăшманĕн калчисене апатлантарассине организацилемелле.

4. Килес çул валли кĕрхи тырăсем акма июнĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр таса çĕртме туса пĕтермелле, çĕртме пуссисене кайран лайăх çемçетсе (культиваци туса, сӳрелесе) тăмалла.

5. Тырпулсене хăвăрт та пĕр тăккаламасăр пухса кĕртмелле. Кашни 15 фут сарлакăш выракан комбайнпа вăтамран 350 гектар вырса пуçтармалла. Колхозсен государствăна тĕштырăпа ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене, çавăн пекех МТС ĕçленĕшĕн натуроплата тӳлемелли плана срокчен пурнăçа кĕртмелле. Çак ĕçе авăн çапма пуçланă малтанхи кунсенченех тытăнмалла. Сахăр кăшманĕ акнă мĕнпур çĕр лаптăкĕн 70 проценчĕ çинчи сахăр кăшманне тракторпа ĕçлекен машинăсемпе кăлармалла.

6. Сентябрĕн 5-мĕшĕнчен кая юлмасăр кĕрхи тырăсене акса пĕтермелле. Кĕрхи çĕртме тумалли плана пĕтĕмĕшпех тултармалла. Сахăр кăшманĕ акмалли çĕр çинче тарăн кĕрхи çĕртме тăвассине сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне вĕçлемелле.

Юлташсем—трактористсемпе комбайнерсем, агрономсемпе механиксем — МТС-сен мĕнпур работникĕсем! Çуракине ăнăçлăн туса ирттерессишĕн, вăйлă тырпул туса илессишĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнăр!

Çуракине тухиччен юлнă кунсенче хамăр çуракине ăнăçлăн ирттерме пурне те туса çитерниле çитерменнине татах та тепĕр хут тĕплĕн тĕрĕслесе тухар!

Аслă Сталин—эпир нимĕççеле пĕтĕмпех çĕнтерес кун çывăхра, тесе каларĕ. Анчах çав çĕнтерӳ нихăçан та хăй тĕллĕн пулмасть, ăна йывăр çапăçусенче, хĕрӳллĕ ĕçре çĕнтерсе илмелле. Берлин çине çĕнтерӳ ялавне хăвăртрах çĕклесе лартма Хĕрлĕ Çара пулăшас тесе, хамăрăн вăйсене хĕрхенер мар, çав ĕçе хамăрăн мĕнпур пĕлӳсемпе пултарулăхсене хурар!

Пирĕн юратнă Тăван çĕршыв сывă пурăнтăр та вăйлăнрах ӳссе чечеклентĕр!

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар татах та ытларах тĕреклентĕр!

Пирĕн юратнă Сталин совет çыннисен телейĕшĕн нумай çулсем хушши сывă пулса пурăнтăр!

Лохвица МТС-ĕн коллективĕ хушнипе çырăва çаксем алă пуснă:

МТС директорĕ **Г. Поштенко.**
КП(б)У Лохвица райкомĕн секретарĕ **И. Венжега.**
МТС-ăн старши агрономĕ **И. Чайка.**
Старши механик **К. Вовк.**
Профсоюз местькомĕн председателĕ **П. Дубьяго.**
Мастерской заведующийĕ **Г. Журавель.**
Комсомол организацийĕн секретарĕ **А. Горобец.**
Участокри агроном **А. Галаган.**
Трактор бригадисен бригадирĕсем — **И. Галько, И. Правдюк.**
Трактористсем — **Д. Симон, Повзун, А. Ухань, П. Овсяник** тата ыттисем те.

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сенче ТРАКТОРСЕМПЕ ВĔСЕНЧЕН КĂКАРСА ĔÇЛЕМЕЛЛИ МАШИНАСЕНЕ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА 1945 ÇУЛХИ АПРЕЛĔН 1-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(процентпа)

МТС-сем	Тракторсем юсанă	Трактор плугĕсене юсанă	Сеялкăсем юсанă
Шăхасан	100	100	100
Красноармейски	100	90,4	100
Йĕпреç	100	92,8	90,0
Куславкка	100	80,4	75,0
Хĕрлĕ Чутай	100	73,0	76,9
Вăрмар	100	71,9	70,0
Вăрнар	100	91,8	100
Ишлей	100	94,0	100
Канаш	100	93,3	85,0
Комсомольски	100	100	100
Сĕнтĕрвăрри	100	70,8	66,6
Çĕрпӳ	100	80,4	75,0
Чкаловски	100	100	100
Çĕмĕрле	95,8	96,1	61,5
Тăвай	92,8	80,3	85,7
Сурмайдан	92,5	90,2	80,0
Шăмăршă	90,6	48,7	78,6
Улатăр	89,0	50,0	50,0
Кувакино	86,5	81,6	100
Элĕк	84,2	82,6	93,3
Калинино	84,0	64,0	60,0
Шупашкар	82,8	71,7	71,4
Елчĕк	80,1	71,4	80,0
Сĕнтĕр	79,4	62,0	66,6
Первомайски	69,5	50,0	40,0
Октябрьски	66,6	85,1	30,0
Етĕрне	54,8	78,3	66,6
Пăрачкав	46,2	42,1	53,8
Сиява	46,1	32,0	60,0

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ЯЛХУÇАЛĂХ МАШИНИСЕНЕ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА 1945 ÇУЛХИ АПРЕЛĔН 1-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(процентпа)

Районсем	Плугсене юсанă	Сеялкăсене юсанă
Вăрнар	85,4	100,0
Вăрмар	94,2	74,6
Елчĕк	90,1	100,0
Етĕрне	76,1	66,6
Ишлей	100,0	89,2
Йĕпреç	58,3	75,0
Калинино	94,8	92,1
Канаш	73,4	42,5
Куславкка	67,5	72,8
Комсомольски	96,1	100,0
Красноармейски	89,9	100,0
Кувакино	83,3	78,2
Муркаш	89,2	100,0
Октябрьски	76,6	100,0
Первомайски	100,0	54,8
Пăрачкав	57,4	100,0
Сĕнтĕрвăрри	84,0	85,5
Сĕнтĕр	95,6	93,0
Советски	64,3	58,4
Çĕрпӳ	68,4	98,3
Çĕмĕрле	61,5	100,0
Тăвай	72,7	76,3
Улатăр	82,7	78,6
Хĕрлĕ Чутай	73,3	100,0
Чкаловски	100,0	75,8
Чурачăк	93,6	95,0
Шупашкар	56,1	80,7
Шăмăршă	96,4	88,8
Шăхасан	56,9	72,8
Элĕк	64,4	78,7

Ĕççыннисен çырăвĕсем

Чернилпа ручка тупма питех йывăр-ши вара?

Çыхăну çуртне пырса çӳрекенсем халĕ нумайланчĕç. Кунсеренех унта телеграммăсем яракан, укça куçаракан, укça илекен, çырусем çыракан е телефонпа калаçма пыракан çынсене курма пулать. Ĕçпе пыракан çынсене валли кунта хăйне май условисем—сĕтел-пукансем, чернилпа ручкăсем кирлĕ. Шупашкарти çыхăну çурчĕ ĕнтĕ ку тĕлĕшпе примерлă пулмалла. Анчах та кунта ĕçсем пачах урăхла. Подпискăсем, переводсемпе çырусем йышăнакан отделах илер. Унта пурĕ виçĕ сĕтел. Шутласан, ку çителĕклĕ темелле. Анчах сĕтелсем çинче чернилпа ручкăсем çук. Бланкăсем çине çырма тăрсан, унта-кунта чупса, чернилпа ручка шырасах ăнран каятăн.

Телефонпа телеграф отделĕнче те çав çитменлĕхсемех. Шупашкарти почта начальникĕн шучĕпе, кашни пыракан çынна хăйпе пĕрле чернилпа ручка илсе пымалла-ши вара?

С. МОИСЕЕВ.

Фельдшер пунктне пулăшмаççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Атнарти фельдшер пунктне уçни темиçе çул та çитет ĕнтĕ. Иртнĕ çулсенче вăл лайăх ĕçленĕ пулсан, хальхи вăхăтра ĕççыннисен ыйтăвĕсене пурнăçласа пыраймасть. Кунта суранссене çыхмалли хатĕрсем, кирлĕ эмелсем те çук. Ĕççыннисене фельдшер пункчĕ нимĕнле пулăшу та параймасть.

Фельдшер пунктне ял Совечĕпе районри сывлăх пайĕ те пулăшмаççĕ.

П. ТИХОНОВ,
М. ФОНДЕРКИН.

Стройпа юрламалли юрăсем кирлĕ

Юрă—çыннăн вăй-халне, кăмăлне çĕклет. Пирĕн подразделенире 1927 çулта çуралнă чăваш ачисем вĕренеççĕ. Чăваш боецĕсем стройпа утнă чух, ытти юрăсемпе пĕрлех, чăваш юррисене те юрласшăн. Анчах ун пек юрăсем пирĕн çук-ха. Çавăнпа та эпир чăваш поэчĕсемпе композиторĕсене стройра утнă чух юрламалли юрă-сăвăсем ытларах çырма сĕнесшĕн.

Гварди старшини **НИКИТИН.**
Кĕçĕн сержант **ВЯЗОВ.**

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре калани тăрăх, союзниксен чаçĕсем Руртан хĕвелтухăçнерехре Липпштадт хули патĕнче пĕрлешнĕ. Çапла вара, Германи çарĕсен пысăк группировкине хупăрласа илнĕ. Тăшманăн çак пысăк группировкине пĕтерсе тăкма чылай вăхăт кирлĕ пулать, мĕншĕн тесен Рурта халăх питĕ нумай пурăнать тата Руртан кăнтăрарахри район сăртлă. Анчах та çакă союзниксен çарĕсем Германи ăшнелле кĕрсе пырассине чăрмантараймасть.

Руртан çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем хăвăрт куçса пыраççĕ, хăшпĕр участоксенче кун каçиччен 24 километра çити кайнă. Союзниксен чаçĕсем Падерборн хулине тăшмантан тасатса пыраççĕ, тăшман унта вăйлăн хирĕç тăрса çапăçать.

Варбург хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре нимĕççем союзниксен çарĕсене вăйлăн хирĕç тăраççĕ. Римбек районĕнче союзниксен пехоти 9,5 километр куçнă та Кассель хулинчен 10,5 километр кăнтăрарахра ларакан Бесс хулинчен çурçĕртерехри пункт патне çитнĕ. Кассель хулинчен 24 километр кăнтăрарахра союзниксен бронетанковăй чаçĕсем Фульда шывĕ урлă каçнă. Танксемпе тата артиллерипе усă курса, нимĕççем хирĕç тăнă.

Майн çинчи Франкфуртран çурçĕртерехре союзниксем вăл территорие тăшмантан тасатса пыраççĕ. Тăшман унта вăйлăн хирĕç тăрать. Нимĕççем Ашаффенбургра та вăйлăн хирĕç тăрса çапăçаççĕ. Нимĕççем Ашаффенбурган хĕвеланăçнерехри Швейнгельм хулине татах кĕрсе кайнă. Ку хула уншчен союзниксен аллинче пулнă.

Союзниксем, Майн шывĕ тăрăх наступлени туса пырса, 29 километр таран малалла куçнă. Маннгеймран кăнтăрарахра союзниксен Рейн шывĕ урлă каçнă чаçĕсем 29 километра çити малалла куçнă та автострада çулне татнă. Мартăн 31-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем 22.877 çынна тыткăна илнĕ.

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ РУРА ХУПĂРЛАСА ИЛНĔ

ЛОНДОН, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтерни тăрăх, Рура хупăрласа илнĕ, тăшман чакса тухмалли çулсене пурне те татнă.

Çак операцие апрелĕн 1-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен вĕçленĕ. Монтгомери фельдмаршалăн штабĕ çумĕнчи корреспондент пĕлтерни тăрăх, кăнтăрла иртсен 3 сехетре Симпсон генералăн 9-мĕш армине кĕрекен 2-мĕш бронетанковăй дивизи американецсен Ходжес генерал ертсе пыракан 1-мĕш армийĕн малти чаçĕсемпе Гамман 37 километртра ларакан Липпштадт хули патĕнче пĕрлешнĕ. Верховнăй командованин штабĕ çумĕнчи корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, 25—30 пин нимĕçе хупăрласа илнĕ.

НИМЕÇСЕМ ГОЛЛАНДИРЕН ЧАКНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле нимĕç çарĕсем Голландирен чакма пуçланă. Англи летчикĕсем пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 31-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен Германи енне каякан çулсем тăрăх, çынсемпе машинăсем йышлăрах куçма пуçланă, каç пулнă тĕле вара çулсем куçакан транспортпа тулса ларнă.

Хĕвеланăçĕнче союзниксен çарĕсем наступлени туни

ЛОНДОН, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС-ăн çар корреспондентĕнчен). Америка, Англи тата Канада çарĕсем пыра-пыра çапнипе пула, нимĕççен хĕвеланăç фрончĕ арканса кайни халĕ ĕнтĕ пуриншĕн те паллă. Тăшман йĕркеллĕн хирĕç тăрасси пĕтĕм фронт тăршшĕпех пĕтсе ларнă. Хĕвеланăç Германире Рурти йышлă халăх пурăнакан вырăнсенче тата Эммерихран çурçĕртерехре кăна хирĕç тăрса çапăçакан вырăнсем пур. Союзниксем çав вырăнсенче татса кĕме ан пултарччăр тесе, нимĕççем унта хăйсен чи лайăх çарĕсене пухса тăратнă. Анчах та фронт пĕтĕмĕшпех арканса кайнă. Фронт командованийĕ те, çапăçма пултаракан çарсем те, çавăн пекех танксемпе самолетсем те çукпа пĕрех тата артиллери те питĕ сахал. Германин верховнăй командованийĕ хĕвеланăç фрончĕ çине алă сулчĕ пулас, вăл союзниксен наступленине чарма хăтланмасть те. Американецсен 1-мĕш армийĕпе акăлчансен 2-мĕш армийĕн танковăй колоннисем хĕвелтухăçнелле куçса пыраççĕ, вĕсем пысăк Рур районне хĕскĕчпе хĕстерсе лартаççĕ. Çак хăюллă операци вĕçленсе пырать ĕнтĕ. Америка танкĕсем Рурăн хыçалти алăкне хупнă та ĕнтĕ, вĕсем Падерборн районне тухнă. Çав вăхăтрах акăлчансен танкĕсем Рура çурçĕр енчен хӳтĕлесе тăракан Вестфали тӳремĕпе малалла куçаççĕ. Çав отрядсем Руртан хĕвелтухăçнерехре ăста та пулин пĕрлешĕсси инçе мар ĕнтĕ.

Хăрушсăрлăх пирки тунă цензурăна пула, эпир союзниксен чаплă наступленийĕ çинчен тĕплĕн каласа пама пултараймастпăр. Американецсен 1-мĕш армийĕ ĕнер 88 километр малалла куçни çинчен кăна калама пултаратпăр. Вăл арми темиçе хула, вăл шутра темиçе пысăк хула, тытса илнĕ, вĕсене пĕр сиен те кӳмен пулнă. Çавăн пекех самолетсем, танксем, тупăсем, тата ытти тĕрлĕ çар хатĕрĕ туса кăларакан çар завочĕсене нумай тытса илнĕ. Темиçе пин çынна тыткăна илнĕ. Германи варринче ĕнер пысăк аэродром тытса илнĕ, союзниксен тактикăллă авиацийĕшĕн çав аэродром питĕ усăллă пулма пултарать.

Рур бассейнĕн тепĕр енче Британин 2-мĕш армийĕн танкĕсем Вестфали тӳремĕн питĕ анлă фронтĕнче малалла куçса пыраççĕ. Çав тери хăвăрт куçса пынине пула, вăл союзниксен авиацийĕн ĕçĕсене кăшт йывăрлатать, мĕншĕн тесен авиаци бомбăсем пăрахмалли фронта кун каçиччен 20 хут та улăштарма тивет. Çав отрядсем Бохольт тата Дорстен хулисенчен иртсе кайнă. Танксем хыççăн пехота соединенийĕсем пыраççĕ, вĕсем ĕнер 16 километр куçнă. Британин 2-мĕш армийĕн сулахай флангне хӳтĕлесе тăракан Канада чаçĕсем нимĕççен парашют чаçĕсем хирĕç тăнине сирсе пыраççĕ. Çав парашют чаçĕсем хĕвеланăçĕнче нимĕççен çапăçма пултаракан пĕртен-пĕр чаçĕсем пулса тăраççĕ. Канада чаçĕсем вĕсене çурçĕр-хĕвелтухăçнелле хăваласа пыраççĕ.

Британи армийĕн сылтăм флангне хӳтĕлесе тăракан американецсен 9-мĕш армийĕ нимĕççен хирĕç тăнине сире-сире пырать. Германин верховнăй командованийĕ çапла мухтанатчĕ: Рур районĕ нимĕççен аллинче пулнă чухне, союзниксем Германи ăшнелле кĕме хăтланни хăйсене хăйсем вĕлерни пулать, тетчĕ. Ку ĕнтĕ ухмахланса калпайлани кăна пулнă. Союзниксем халĕ Германи варрине инçе кĕрсе кайнă. Гитлерăн верховнăй командованийĕн халĕ хăйĕн эмелне хăйĕнех тутанса пăхма тивет. Çав района хӳтĕлеме хăварнă нимĕç çарĕсем пĕтесçех, вĕсем е тĕрмере, е тупăкра пулĕç. Эсэсовецсемпе нацистсем, наступлени туса пыракан союзниксен çарĕсен тылĕнче тăрса юлнăскерсем, союзниксен салтакĕсене вĕлерес килнипе кăна вĕлереççĕ. Вĕсенчен виççĕшне эпир Везель хулинчен хĕвелтухăçнерехри вăрманта куртăмăр: пĕри—ватă нацист, иккĕшĕ—гитлерла çамрăксен отрядĕнчи ачасем. Вĕсенчен пĕрне тимĕр хĕрĕсле наградăланă. Йывăççем хыçĕнче пытанса, вĕсем союзниксен çарĕсен инженерла оборудовани обозĕпе пĕрле пыракан икĕ салтакне вĕлерчĕç. Союзниксен автоматчикĕсем хупăрласа илсен, вĕсем аллисене çӳлелле тăратрĕç те «Гитлер капут!» тесе кăшкăрма пуçларĕç. Йывăççем хушшинче пытанса пени союзниксен çарĕсене хăшпĕр çухатусем кӳме пултарать, анчах та вăл гитлерла Германие çăлса хăварма пултараймасть.

Наступлени питĕ хăвăрт пырать, ăна çул япăххи тата горючи çитменни кăна чăрмантарать. Йышлăрах та йышлăрах çарпа техника Германи çĕрне кĕрсе пыраççĕ.

САМОЛЕТ-СНАРЯДСЕМ АНГЛИЕ ТАПАНМА ЧАРĂННИ

ЛОНДОН, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтерни тăрăх, самолет-снарядсем Лондона тата кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи тинĕс çыранне тапанма чарăннă.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави армийĕн генеральнăй штабĕ мартăн 30-мĕшĕнче пĕлтернĕ тăрăх, 8 кун хушши пынă хаяр çапăçусем вăхăтĕнче Югослави çарĕсем нимĕççен 373-мĕш, 104-мĕш, 392-мĕш дивизийĕсене тата усташасен 10-мĕш дивизине аркатса тăкнă. Вилнисене кăна шутласан та, тăшманăн 40.000 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ. 2.000 çынна ытла тыткăна илнĕ. Тыткăна илнисем хушшинче усташасен 10-мĕш дивизийĕн командирĕн заместителĕ пур.

РУМЫНИРЕ ФАШИСТЛА ПРЕСТУПНИКСЕНЕ АРЕСТЛЕНИ

БУХАРЕСТ, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Скынтейя» хаçат Румыни полицийĕпе сигурантсен (вăрттăн ĕçлекен полицин) аслă чиновникĕсене, активлă железногвардеецсене тата гитлеровецсем майлă ĕçлесе тăнă çынсене пурĕ 83 çынна арестлени çинчен пĕлтерет.

Ют çĕршыв хроники

▲ Юлашки кунсенче Дани патриочĕсем Копенгагенри тата Данири ытти хуласенче нефтехранилищĕсенче сăтăрла ĕçсем тунă. Копенгаген хулинчи машинăсем тăвакан заводра, нимĕççен подводнăй лодкисем валли тĕрлĕ пайсем хатĕрлекенскерĕнче, патриотсем заводăн тĕп цехĕсене пурне те сирпĕтерсе янă.

▲ Тегеран хулинче А. Н. Толстой писателе асăнса вечер туса ирттернĕ. Толстой пурнăçĕпе творчестви çинчен ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин генеральнăй директорĕ Аноари доклад туса панă.

▲ США-ра «Б-32 Доминейтор» йышши хăватлăран та хăватлă çĕнĕ бомбардировщиксем тума пуçланă. Çĕнĕ бомбардировщиксен пысăкĕшĕ «Вĕçекен крепость Б-29» бомбардировщиксенни пекех пулать.

▲ Болгари çарĕн главнокомандующийĕ Иван Маринов генерал-лейтенант Югослави столицине—Белград хулине пырса кайнă. Унта вăл Тито маршалпа тĕл пулса калаçнă.

▲ Вăрçă пуçланнăранпа Лăпкă океанра американецсен подводнăй лодкисем японецсен 1.072 суднине путарнă. Вăл шутра —117 çар карапĕ.

▲ София хулинче Болгарири рабочисен профсоюзĕсен пĕтĕмĕшле съезчĕ ячĕпе пит пысăк манифестаци пулса иртнĕ.

▲ Хельсинки хулинче Нацилле театр çуртĕнче Ленинградри оперăпа балетăн академиллĕ театрĕн солисчĕсен концерчĕ пулса иртнĕ.

▲ Америка самолечĕсем испанецсен 6 суднине шыва путарнă. Çав суднăсем Франции Атлантика океанĕ хĕрринчи хăшпĕр порчĕсенче тăракан Германи çарĕсене тĕрлĕ хатĕрсем парса тăма хăтланнă пулнă.

▲ Çурçĕр Италире вăрттăн тухакан хаçатсем йышлăн саралнă. Ноябрь уйăхĕнче вăрттăн тухакан хаçатсем пĕр Милан хулинче кăна 700.000 экземпляр ытла саланă.

▲ Дани патриочĕсем Ютландири Ольборг хулинче хула архивĕн çуртне вут тĕртнĕ. Фашистсене хирĕç пухăшлакан датчансен спискĕ çунса кайнă.

▲ Нью-Йорк хулинче «Жди меня» ятлă совет фильмне, акăлчан чĕлхипе калаçакан тунăскерне, кăтартма пуçланă. Нью-Йоркри хаçатсем çав фильма пысăк хак панă. (ТАСС).

ХРОНИКА

СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Аполлон Александрович Петров юлташа СССР-ăн Китайри Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартнă.

СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Александр Семенович Панюшкин юлташа вăл чирлĕ пирки СССР-ăн Китайри Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ пулса ĕçлессинчен хăтарнă.

Совет Союзĕ тăрăх

ЛИТВАРИ ХРЕСЧЕНСЕН 1-МĔШ СЪЕЗЧĔ ХУПАННА

Литва хресченĕсен 1-мĕш съезчĕ хăйĕн ĕçĕсене вĕçленĕ. Съездра пулнисем çуракине пысăк пахалăхпа ирттерессишĕн кĕрешме Совет Литван пур ĕçхресченĕсене те чĕнсе каланă тата ялхуçалăх ĕçĕсене лайăх туса ирттерес тĕлĕшпе Латви ССР-ĕнчи хресченсене социализмлă ăмăртăва тухма чĕнсе, ăмăрту условийĕсене çирĕплетнĕ.

Нумайччен тăвăллăн алă çупса, съезд делегачĕсем Сталин юлташ патне салам яма йышăннă. (ТАСС).

ПОЛЯР ХЫÇĔНЧИ ИР ӲСЕКЕН ПАХЧА-ÇИМĔÇСЕМ

Поляр хыçĕнчи сăнавлă ялхуçалăх станцийĕсен тата «Воркутуголь» совхозăн теплицисенче çуркунне çитнĕ. Унта хăярсем чечеке ларнă, сухан тата кишĕр ӳсет.

Агрономсем сивве тӳсекен, хăвăрт пиçсе çитекен пахча-çимĕç сорчĕсене туса кăларас тĕлĕшпе çулталăкĕпех ĕçлеççĕ. Салехард тата Нарьян-Марски сăнав станцийĕсем хăйсен хуçалăхне кирлĕ пахча-çимĕç вăрлăхĕ хатĕрленĕ, çывăхри колхозсемпе совхозсене те вăрлăх туянтараççĕ. (ТАСС).

Хабаровскри педагогика институчĕн çурçĕр отделенийĕнче эвенсем, нанаецсем, чукчасем тата çурçĕрти ытти халăхсем те вĕренеççĕ.
Ӳкерчĕк çинче: Педагогика институчĕн 1-мĕш курсĕнче вĕренекен студентка—нанаец хĕрĕ Мария Киле.
В. БАЙДАЛОВ фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

БЕЛОРУССИРИ КОЛХОЗСЕНЕ ÇĔРПЕ ĔМĔР УСĂ КУРМАЛЛИ ГОСУДАРСТВО АКЧĔСЕМ ПАРАÇÇĔ

Белоруссире колхозсене çĕрпе усă курмалли государство акчĕсем параççĕ. Вăл актсене чи малтан Минск облаçĕнчи Сталин ячĕпе, Дзержинский ячĕпе тăракан колхозсем тата «Искра» ялхуçалăх артелĕ илнĕ. Çак ĕç пур çĕрте те пысăк уяв пек пулса иртет. Колхозниксем ялхуçалăхне хăвăртрах ура çине тăратма, уйхирсенче тăрăшса ĕçлесе, тăшмана аркатса тăкмашкăн Хĕрлĕ Çара ытларах пулăшма сăмах параççĕ. (ТАСС).

В. Г. БЕЛИНСКИЙ СОЧИНЕНИЙĔСЕН АКАДЕМИЛЛЕ ИЗДАНИЙĔ

Ленинградри литературоведсен ушкăнĕ В. Г. Белинскин çырăвĕсемпе сочиненийĕсен пĕтĕм пуххине çĕнĕрен пичетлесе кăларма хатĕрленеççĕ. Мĕн пурĕ 12 том кăлармалла, унта аслă критикăн 150 статьипе рецензийĕ кĕмелле.

Вăл сочиненисен пуххи 1948 çулхи июнь уйăхĕ тĕлне—Белинский вилнĕренпе 100 çул тултарнă тĕле пичетленсе пĕтмелле. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00053 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000